Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Сарине (Иванова) Лидия Михайловна

## Книга: Чӗрӗп инке

## Стих: Чӗрӗп инке

Чӗрӗп инке, шăши юс
Темшӗн питӗ шавлаççӗ...
Чее тилӗ, упа тус
Апат кӗтсе лараççӗ.

Упа пичче – мăкăрти,
Пыл пек пылак çиесшӗн.
Чее тилӗ – йăпăлти,
Çу пек çуллă çиесшӗн.

– Ах, çав чӗрӗп пит наян! –
Тилӗ лăпкăн лараймасть.
– Хырăм выçрӗ-çке паян, –
Утаман унран юлмасть.

– Каяр киле, упа тус, –
Вӗткеленет шăши юс. –
Чӗрӗп инке – хыт кукар,
Выçса вилсен тем курар! –

Чӗрӗп инке пит вăр-вар
Апат çакса пӗçерет.
– Кăмпа яшки тутлă мар! –
Тилӗ кутăна перет.

Чӗрӗп инке йӗкӗлтет,
Вӗлтрен яшки вӗретет.
Вăрттăн кулать: «Тăхтăр!» – тет,
Йӗплӗ хулă хатӗрлет.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.